







# Кейс ăслайĕпе усă курасси

**Иванова Ирина Васильевна, Вăрмар районĕнчи «Пысăк Енккассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулта» чăваш чĕлхипе литература вĕрентекен**

**Задачăна шутлама вĕренес тесен шутлас пулать.**

**Д. Пойа**

**CASE- ятарлă пулăм, ситуаци. Тĕрлĕ пулăма цифрăпа, сăмахпа, сăнарпа палăртни.**

# Историллĕ ăнлантару

Конкретлă ситуацисене тишкересси 20-мĕш ĕмĕрте аталаннă. **Пĕрремĕш хут кейс ăслайĕпе (**акăлчан сăмахĕ case method**) вĕренӳ процесĕнче** США-ри Гарвард университетĕнче **1908 çулта усă курнă**. Унăн ячĕ латин чĕлхинчи «casus» термин- арпашăннă пулăм тенине пĕлтерет.

Раççейре ку çĕнĕ ăслайпа юлашки 3-4 çулта çеç усă курма пуçланă.

**Кейс ăслайĕ** – *(вĕренӳ чăматанĕ е вĕренӳпе тĕрĕслев материалĕн пухчи)* – **çĕнĕ ăслай**



акăлчан чĕлхинчен кĕнĕ сăмах

**case – кейс, чăматан;**

**case method – кейс ăслайĕ**



Кейс ăслайĕн вĕренӳ процесĕнчи тĕллевĕ – кăткăс ыйтăва татса пама хăнăхтарасси, тĕрĕс йышăну тума вĕрентесси.

## Ăслайăн усăллă енĕсем:

- ачасен вĕренес кăмăлне ӳстерни;
- вĕренекенсен малашне вĕренӳре, ĕçре кирлĕ ăс-хакăлне аталантарни;

# Кейс технологийĕн усăллă енĕсем

- кашни ачан вĕренес хăвăртлăхĕ тĕрлĕрен: пĕри хăвăртах ăнкарса илет, теприн вара çав ĕçех тума вăхăт ытларах иртет. Кейс ăслайне пула ача вĕренĕве хăйне кирлĕ пек йĕркелеме пултарать;
- ача коллективра ĕçлеме хăнăхать, пурнăçра сиксе тухакан ыйтусене татса пама вĕренет, шкул ачин хăйне шанаслăхĕ ӳсет.
- ачасене хамăр вĕрентекен предметпа тарăнрах пĕлӳ пама, тĕрлĕрен олимпиадăпа конкурса хатĕрлеме пулăшать;
- ача вĕренӳ материалне пĕтĕмпех курать, чирпе е урăх сăлтавпа урок сиктернĕ пулсан та çĕнĕ материала хăй тĕллĕнех ăша хывать;

# Кейс тĕсĕсем




- ***Хăнăхтаракан*** *(тренировочный)*
- ***вĕрентекен*** *(обучающий)*
- ***Тишкерекен*** *(аналитический)*
- ***Системăлакан*** *(систематизирующий)*
- ***Тĕпчекен*** *(исследовательский)*
- ***Малашнехине палăртакан*** *(прогностический)*

# Ăслайпа ĕçлес йĕрке



1. Тĕп ыйтусене палăртни
2. Информаци пуçтарни
3. Йышăну туни
4. Тĕрлĕ çул-йĕре пăхса тухни
5. Танлаштаруллă тишкерÿ
6. Йышăнусен презентацийĕ



# *Кейс технологийĕн аталану çул-йĕрĕ*

- **кейс пухчисем туни**
- **харкам вĕренĕвне йĕркелени**
- **ачасем (ушкăнсем) пултарулăх ĕçĕсем туни**
- **пĕлĕве хакламалли мелсене пуянлатни**

| Тапхăрсем | Вĕрентекен ĕçĕ | Ачасен ĕçĕ-хĕлĕ |
|---|---|---|
| Урокчен | 1. Кейс тăвать<br>2. Тĕп тата пулăшу материалĕсене хатĕрлет<br>3. Урок йĕркине палăртать | 1. Хатĕрленĕ кейс тата хушма литература списокне илет<br>2. Харпăр хăй тĕллĕн урока хатĕрленет |
| Урок вăхăтĕнче | 1. Кейспа мĕнле усă курмаллине ăнлантарать<br>2. Класа ушкăнсене уйăрать<br>3. Ушкăнсен тишкерĕвне йĕркелет, сĕнӳсем парать, тавлашуллă ыйтусене татса пама пулăшать | 1. Кейса тата тăратнă ыйтăва (проблемăна) туллинрех ăнланма пулăшакан ыйтусем парать<br>2. Йышăну варианчĕсем йĕркелет<br>3. Ку е вăл йышăну тăвать, е ушкăн йышăну тунă çĕре хутшăнать |
| Урок хыççăн | 1. Вĕренекенсен ĕçне хаклать<br>2. Ачасен йышăнăвĕсене тата ыйтăвĕсене хак парать | 1. Палăртнă темăпа проект çырать |

# Кейс технологине усă курни мĕн парать

| *Вĕрентекене* | *Вĕренекене* |
| --- | --- |
| 1.Квалификаци ӳстерме;<br>2.Урок хатĕрленме сехет сахал кайни;<br>3.Урокри хăш-пĕр элемент<br>сене класс тулашĕнче усă курма;<br>4.Вĕрентӳ тытăмне йĕркелеме;<br>5. Базăри материалсемпе усă курма; | 1.Хушма материалпа усă курма;<br>2.Консультаци вăхăтра илме;<br>3.Хăй тĕллĕн ытларах хатĕрленме;<br>4.Ушкăнри ачасемпе хутшăнса ĕçлеме;<br>5.Тĕрлĕ информацилле технологисене алла илме; |

# *Кейс тĕсĕсем*



# Я.Г.Ухсай пурнăçĕпе пултарулăхне

*кейс ăслайĕпе вĕрентмелли тĕслĕхсем*

- «Акăшкул» (1955)
- «Дед Кельбук» (1956)
- «Кĕлпук мучи» (1958)
- «Стаи белых лебедей» (1963)
- «Суйласа илнисем. Тутимĕр» (1975)
- «Суйласа илнисем. Хура тапра» (1977)
- «Суйласа илнисем» (2009)



















**Талантлă сăвăç, драма тург, куçаруçă, публицист, тĕпчевçĕ, 52 кĕнеке авторĕ**

**Яков Ухсай хăйĕн сăввинче çапла çырнă:**

Нихçан та эп хăватăра
Манмастăп, хамăн юррăмра
Ура тапса, пуçа ухса
Сире мухтатăп эп, Ухсай.

**Ыйту: Эсир Ухсай сăмахĕсене мĕнле ăнланатăр? Çут çанталăк унăн пурнăçĕнче мĕнле вырăн йышăнса тăрать?**

1.Фёдоров Фёдор. «Мухтатăп эп, тăпра поэчĕ…»/ Фёдор Фёдоров// Çил çунат. -2001.-№1.-С.2-
2.Фёдоров Г.И. Чăваш литератури: Вĕренӳ кĕнеки: Вăтам шкулăн 11-мĕш класс валли.-Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви. 2010.- 53 с.

**Укерчĕкре Я.Ухсай кампа ларать?**
**Эсир вĕсен туслăхĕ пирки мĕн пĕлетĕр?**



1.Ефимов Г. «Мускаври виçĕ кун». /Георгий Ефимов// Ялав.-1991.-№11.-С.15.
2. Чăваш халăх сайчĕ – http://chuvash.org.
3. Википеди – Ирĕклĕ энциклопедин чăваш уйрăмĕ: http://cv.wikipedia.org/wiki/ (класра Интернет çыхăнăвĕ пулсан материал тӳрех тухать) – Ухсай Яков Гаврилович

**«Кĕлпук мучи» хайлава чăваш халăхĕн вăрăм ĕмĕрĕнчи историйĕ теме пулать-и? Сăлтавлăр.**




1.Фёдоров Г.И. Чăваш литератури: Вĕренӳ кĕнеки: Вăтам шкулăн 11-мĕш класс валли.-Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви. 2010.
2.Ухсай Яккăвĕ. «Кĕлпук мучи» поэма.-Шупашкар.-Чăваш АССР государство издательстви.-1956.

# Пĕтĕмлетӳ

Кейс технологийĕпе вĕрентӳре тĕллевлĕ усă курас тесен:
пĕрремĕшĕнчен, пĕлӳ тĕллевĕпе пĕр пулмалла;
иккĕмĕшĕнчен, ĕçсене панă чух çакна асра тытмалла: хуравĕсене  тĕрлĕ çĕртен шыраса тупма май пултăр;
виççĕмĕшĕнчен, проблемăсене палăртас йывăрлăхпа, информации йышĕпе уйрăлса тăмалла;
тăваттăмĕшĕнчен, кейс материалĕсене пурнăç улшăнăвне шута хурса хатĕрлемелле.